# Иван Яковлев чăваш халăхне панă халал

***(4-мĕш класра irттернĕ вулав урокĕ)***

***З.В. ВАСИЛЬЕВА,*** *Патăрьел районĕнчи Аслă Чементи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта кĕçĕн классене вĕрентекен*

**Урок тĕсĕ:** хайлава туйма-ăнланма вĕрентмелли урок.

**Тĕллев**: ачасене И.Я. Яковлев чăваш халăхне панă халалăн тĕп шухăшĕсемпе паллаштарасси; çыхăнуллă пуплеве, шухăшлава, тимлĕхе аталантарасси; çыннăн ырă енĕсене курма, ĕçчен те тимлĕ, туслă пулма, тĕрĕслĕхшĕн çине тăма, пур халăха хисеплеме вĕрентесси.

**Урок мелĕсемпе меслечĕсем:** учитель сăмахĕ, илемлĕ вулав, рольсемпе вулани, ыйту-хурав, тишкерӳ, инсценировка лартни.

**Пуплеве аталантарасси**: шухăша йĕркелесе калама вĕрентесси.

**Кирлĕ хатĕрсем:** И.Я. Яковлев сăн ӳкерчĕкĕ тата пĕчĕк арча.

**У р о к ю х ă м ĕ**

В ĕ р е н т е к е н. Сывлăх сунатăп. Ачасем, эпир кĕнекери мĕнле пая вĕренме тытăннă-ха? (*Ачасем хуравлаççĕ.*)

Вĕренекенсем Петĕр Хусанкайăн «Эп – чăваш ачи» сăвва илемлĕ вулаççĕ.

В ĕ р е н т е к е н. Çак йĕркесене кам каланă-ши? «Халăхăн ăс-тăнĕпе унăн пĕтĕм тĕнче курăмне тăван чĕлхе чун парать. Тăван чĕлхесĕр чăн-чăн пĕлӳ çук». (*И.Я. Яковлев.*) Ачасем, эсир Иван Яковлевич çинчен мĕн пĕлетĕр-ха? (*Ачасем хуравлаççĕ.*)

1 - м ĕ ш а ч а. Иван Яковлевич Яковлев 1848 çулхи ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче Тутар Республикинчи Кăнна Кушки ялĕнче çуралнă.

2 - м ĕ ш а ч а. Вăл çуралсан виççĕмĕш кунне амăшĕсĕр тăрса юлнă. Ăна Пахом хресчен çемйи усрава илнĕ. Пахом старик суккăр пулнă. Иван ăна çавăтса çӳренĕ.

3 - м ĕ ш а ч а. Пахом çемйи ачаранах Ивана ĕçе хăнăхтарнă. Вĕсем пĕрле лашапа çӳренĕ, тырă вырнă.

4 - м ĕ ш   а ч а. Шкула кайиччен Иван Хаким ятлă тутарпа кĕтӳ пăхнă. Хаким Ивана тутарла вĕрентнĕ, пушă явма хăнăхтарнă. Çапла майпа Иван шкула кайиччененех темиçе чĕлхепе паллашнă.

5 - м ĕ ш   а ч а. Сакăр çулта Ивана вырăс ялне шкула вĕренме янă. Вăл шкултан лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă.

6 - м ĕ ш   а ч а. Шкул пĕтерсен ăна Чĕмпĕрти уес шкулне вĕренме илнĕ.

7 - м ĕ ш   а ч а. Иван Яковлев чăвашсене юратнă. Вĕсене вĕрентесшĕн пулнă.

8 - м ĕ ш   а ч а. Çавна пула вăл гимназие вĕренме каять. Кунтан лайăх вĕренсе тухсан Хусанти университета çул тытать.

9 - м ĕ ш   а ч а. Университетра вĕреннĕ чух çĕнĕ чăваш алфавичĕ хатĕрлет, букварь пичетлесе кăларать. «Чăваш букварĕ» валли калавсем те Иван Яковлевич хăех çырнă.

В ĕ р е н т е к е н. Ачасем, эсир унăн калавĕсене вуланă-и? Çакна тĕрĕслеме халĕ викторина ирттеретпĕр.

***«Малалла мĕн пулнă?» конкурс.*** *(Калав содержанине çывăх предложени йĕркелесси).*

1. Ĕлĕк пĕр кахалпа юлхав пурăннă тет. Кахалĕ улма йывăççи айне кĕрсе выртнă тет те … (*«Ай-ай, манăн çăвара пĕрер улми татăлса ӳкинччĕ», – тесе выртать тет.*)

2. Вăл тăр кăнтăрла урапа çине хăпарать те … (*«Ки-ки-рик-ку!» – тесе авăтать*).

3. «Çак ху айăнтиех мар-и? – тесе каларĕ тет лешĕ. Хайхи ут çинчен анса пăхрĕ тет те лашине … (*«Çакă, çакă, çакă!» – терĕ тет.*)

4. Хам çуна çине лартăм та … (*«Ну, атя, Хураçка, урамалла», – тесе пушăпа çат! тутартăм.*)

***«Сăнланă тăрăх герой ятне пĕл» конкурс.***

1. «Шурă улаччĕ», – тесе каларĕ тет. (*Лаша.*)

2. Сасси аван, хӳри илемлĕ, авăна-авăна тăрать. Киккирикки пысăк, тĕклĕ ураллă, качи вăрăм. (*Автан.*)

3. Çулла вăрманта пурăнать, юр çусан яла пырать. Ялтан çăмарта вăрласа кайса чĕпписене тăрантарать. (*Чакак.*)

4. Эпĕ ăна хĕлле çунашкана кӳлтĕм. (*Хураçка.*)

***«Хăш калавран?» конкурс.***

1. Манăн пуçа кĕлет пĕрени çумне шан! тутарса хăварчĕ. («*Хураçка*».)

2. Хĕлле сивĕ пулсан йывăç çине ларать те: «Чак-чакак, чак-чакак», – тесе чакаклатать». (*«Чакак».*)

3. «Эсĕ ăçта та пулин ют лаша çӳренине курман-и?» – тесе калать тет. (*«Лаша шырани».*)

4. «Çапла çав, ачам: ĕçлесе çисен çăкăр та тутлă, тăрансан пыл та йӳçĕ», – терĕ тет ашшĕ. («*Кулачă*».)

5) «Ан тив çынна, ан тив çынна, ак сана!» – терĕ. («*Михала*».)

В ĕ р е н т е к е н. Ачасем, калав ячĕсене тĕрĕс лартса мĕнле сăмах вуларăр? (*Ачасем хуравлаççĕ.*)

| | | | | | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | **х** | у | р | а | ç | к | а | | | | |
| | | | ч | **а** | к | а | к | | | | | | | |
| | | | | **л** | а | ш | а | | ш | ы | р | а | н | и |
| | к | у | л | **а** | ч | ă | | | | | | | | |
| м | и | х | а | **л** | а | | | | | | | | | |

В ĕ р е н т е к е н. Мĕн-ха вăл халал?

***Словарьпе ĕçлени.*** Халал – пил, ырă сăмах.

В ĕ р е н т е к е н. Ачасем, пирĕн урок теми мĕнле-ши? (*Иван Яковлев чăваш халăхне панă халал.*) И.Я. Яковлев хăйĕн кашни пилне пире вĕрентсе, ырă сунса панă. Иван Яковлевич çапла çырса хăварнă: «Килĕшсе ĕçленĕ ĕç пысăк усăллă – çакна пĕлсе тăрăр, ун пек ĕçе юратăр. Чи пĕчĕк ĕçе те пит пикенсе, юратса ĕçлĕр!» Çак 1-мĕш халала эпир ***«Ĕçе хăнăх»*** ят парăпăр. Ача ĕçе чи малтан ашшĕ-амăшĕпе ĕçлеме хăнăхать. Чăваш ĕçченлĕхĕ халăхăн ĕмĕртен пыракан хăвачĕ.

1 - м ĕ ш а ч а. Çавăнпа ĕлĕк чăвашсем: «Улттăри арçын ача ашшĕн ĕçне тума, улттăри хĕр ача амăшĕн ĕçне тума пултартăр», – тенĕ.

М а р г а р и т а. Эпĕ пĕлетĕп: чăвашсем çурхи ĕççене вĕçлесен Акатуй, Çимĕк уявĕсене ирттереççĕ. Иртнĕ çулла эпĕ куккасем патĕнче Çимĕкре пулса куртăм. Эх, хитре ташлаççĕ вăл ялсем! Эпĕ те вĕренсе юлтăм.

2 - м ĕ ш а ч а. Ан мухтан-ха, Маргарита!

М а р г а р и т а. Мĕн, суятăп тетĕн-им? (*Хĕр ачасем енне çаврăнса.*) Айтăр, тусăмсем, ташласа парар пĕрре!

Хĕр ачасен ушкăнĕ «Илемлĕ» ташă ташлать.

В ĕ р е н т е к е н. Маттур, ачасем! 2-мĕш халала эпир ***«Туслă пурăнар»*** тейĕпĕр. Туслă пурăнмалли çинчен Иван Яковлевич ача-пăча калавĕсенче нумай çырнă. «Тилĕпе тăрна» ятлă калава Букваре те кĕртнĕ.

3 - м ĕ ш  а ч а. Эпир «Тилĕпе тăрна» калава питĕ юрататпăр. Ун тăрăх ятарласа пĕчĕк сценка хатĕрлерĕмĕр.

Ачасем «Тилĕпе тăрна» сценка лартса параççĕ.

В ĕ р е н т е к е н. Çапла, çăкăр-тăвар хире-хирĕç теççĕ чăвашсем.

4 - м ĕ ш  а ч а.

Пирĕн класри ачасем –

Пурте туслă ачасем.

Туслăх пирĕн хушăра

Питĕ пысăк вырăнта!

В ĕ р е н т е к е н. «Тăван халăха пулăшса пымалла. Эсир вĕсен хушшинчен тухнă, ĕçлессе те вĕсемшĕн ĕçлемелле», – тесе çырнă Иван Яковлев. Çавăнпа та эпир 3-мĕш халала ***«Ăслă-тăнлă пулăр»*** ят парăпăр.

5 - м ĕ ш  а ч а. Вăл хăйĕн калавĕсенче ачасен пурнăçне, вĕсемпе пулса иртнĕ ĕçсене çырса кăтартнă.

6 - м ĕ ш  а ч а. Чылайăшĕ вĕрентсе каланипе е ваттисен сăмахĕпе вĕçленет.

В ĕ р е н т е к е н. Çак ватисен сăмахĕсене Иван Яковлевич Яковлев çырнă хăш калавран илнине пĕлĕр.

– Шывăн турачĕ çук теççĕ. (*«Çуркунне».*)

– Çавă ĕнтĕ, нумая хапсăнсассăн нимĕнсĕрех тăрса юлăн. (*«Йытăпа унăн мĕлки».*)

– Çăкăр-тăвар хире-хирĕç теççĕ. (*«Тилĕпе тăрна».*)

– Ута пăхакан çуран çӳремен, ватта пăхакан выçă çӳремен теççĕ ваттисем. (*«Хĕветĕр».*)

– Вăрă çинче çĕлĕкĕ çунать. (*«Çухалнă укçа тупăнни».*)

– Пĕрре улталăн, иккĕ улталăн, виççĕмĕшĕнче макăрăн теççĕ ваттисем. (*«Суеçĕ».*)

В ĕ р е н т е к е н. 4-мĕш халал çапларах янрать: ***«Йĕркеллĕ, типтерлĕ пулăр, астаракан япаларан шикленĕр, эрех таврашĕнчен, ытти ăçтиçукран хăраса тăрăр».*** Ачасем, сывлăхлă çын телейлĕ, ăна пĕчĕкренех упрама пĕлес пулать.

7 - м ĕ ш  а ч а. Сывлăхлă пулас тесе эпир спортпа питĕ туслă.

В ĕ р е н т е к е н. 5-мĕш халал та пысăк пĕлтерĕшлĕ: ***«Сирĕн пурнăçра ялан тĕрĕслĕх пултăр»***. Чăннипех те, тĕрĕслĕх – чи хаклă пуянлăх. «Кукăр çулпа çӳресрен, ултавпа тăвас ĕçрен хăраса тăрăр». Çак шухăш Иван Яковлевичăн «Суеçĕ» ятлă калавĕнче уйрăмах палăрать.

Ачасем черетпе «Суеçĕ» калава каласа параççĕ. Вĕçне пурте пĕрле калаççĕ.

А ч а с е м. Çапла çав: пĕрре суйăн, тепре суйăн, виççĕмĕшĕнче ларса макăрăн.

В ĕ р е н т е к е н. 6-мĕш халал: ***«Ырлăх тени кашни ачан чĕринче пултăр»***. «Аннĕр сĕчĕпе йышăннă чĕлхене ан манăр, халăх чĕрине ăнланса илме тăван чĕлхерен ютшăнмасан çеç пулать», – тесе çырнă Иван Яковлев. Ан манăр, туссем: атте-анне чĕлхи – пуринчен те пахи, пуринчен те илемли! 7-мĕш халал: ***«Кашни чăваш пурнăçĕнче чун-чĕре илемĕ тĕп вырăнта пултăр».*** Чăваш – чунтан-вартан юратакан халăх. Юратма пĕлни хăйне кура илем. Пурте илемлĕ пулмалла çынра: сăн-пичĕ те, хăйне тыткалани те, юрри-ташши те, калаçăвĕ те, ĕçĕ-хĕлĕ те, пурнăçĕ те.

«Илемлĕ, илемлĕ…» чăваш халăх ташши.

В ĕ р е н т е к е н. Ачасем, эпир сирĕнпе паян мĕн çинчен калаçрăмăр?

Ачасем доска патĕнче схема тăрăх пĕтĕмлетӳ тăваççĕ. И.Я. Яковлев халалне (çичĕ пиле) чечек евĕрлĕ вырнаçтараççĕ.

В ĕ р е н т е к е н. Çын çак çичĕ пилпе килĕшӳллĕ пурăнать пулсан ăна чăн-чăн çын тесе шутланă. Ачасем, эсир сĕтел çинче мĕн куратăр? (*Арча.*) Кунта – И.Я. Яковлев çырнă халал кĕнеки тата «Пилĕкне хытă çых, ăсна çирĕп тыт» ваттисен сăмахĕ. Ку пилсене Иван Яковлевич ĕмĕрлĕхе çырса хăварнă. Эсир те, ачасем, унăн халалĕсене яланах асра тытăр, вара пурнăçăрта йăнăшсем те сахалрах пулĕç.

П у р т е. Çапла пултăр!

**Рефлекси.**

Паян эпĕ урокра çĕнни… (*илтĕм, илмерĕм*).

Маншăн тема … (*çăмăл е йывăр пулчĕ*).

Эпĕ пур ĕçе те… (*пурнăçларăм е пурнăçлаймарăм*).

Эпĕ темăна… (*ăнлантăм е ăнланмарăм*).

Эпĕ урокра пĕлӳ (*илтĕм е илмерĕм*).

Урок материалĕ маншăн … (*кăсăклă, çĕнĕ, усăллă е кăсăклă мар, çĕнĕ мар, усăллă мар*).